28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 25 ВЫРСАРНИКУН 229 (6980) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитетӗн, ЧАССР Верховный Советӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Союз Советне Чӑваш АССР-ӗнчен депутатсем суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен округсенчи суйлав комиссийӗсен составне çирӗплетесси çинчен

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 43-мӗш, 44-мӗш тата 45-мӗш статьисем тӑрӑх тата «Союз Советне суйламалли округсем çинчен» СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ 1945 çулхи октябрӗн 16-мӗшӗнче кӑларнӑ Указ тӑрӑх, Союз Советне Чӑваш АССР-ӗнчен депутатсем суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен округсенчи суйлав комиссийӗсене çак общественлӑ организацисемпе ӗççыннисен обществисен представителӗсене кӗртсе çирӗплетес:

371-МӖШ НОМЕРЛӖ ШУПАШКАР СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Мария Михайловна Романова — Чӑваш республикинчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Семен Васильевич Эльгер—Совет писателӗсен союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Хиония Клементьевна Железнова—пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Филипп Степанович Бусов—Ишлей районӗнчи «Акара» колхозри колхозниксенчен.

Василий Иванович Караушев—Шупашкар районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Анна Павловна Кокшева—Октябрьски районри «Дружба» колхозри колхозниксенчен.

Григорий Михайлович Михайлов—Красноармейски районри «Смычка» колхозри колхозниксенчен.

Евгений Григорьевич Мищенко—Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводри рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Александра Ивановна Орешкина—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Павел Никитич Столяров—Сӗнтӗр районӗнчи Осоавиахим советӗнчен.

Александра Федоровна Федорова—госучреждени работникӗсен профессиллӗ союзӗн Çӗрпӳ районӗнчи организацийӗнчен.

372-МӖШ НОМЕРЛӖ КАНАШ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Алексей Иванович Киреев—Канаш хулинчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Пантелеймон Васильевич Крылов—Пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Александр Алексеевич Димитриев—Пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Елчӗк районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Калерия Лукинична Абрамова—Пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Шӑхасан районӗнчи организацийӗнчен.

Иван Семенович Долгов — МТС-семпе çӗрӗç органӗсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Василий Григорьевич Жиглаев — Куславккари комбинатра ӗçлекен рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Анна Григорьевна Исаева—Осоавиахимӑн Канаш хули советӗнчен.

Мария Павловна Павлова—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Вӑрмар районӗнчи организацийӗнчен.

Мария Семеновна Семенова—Тӑвай районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Евдоким Федорович Федоров — Вӑрман хатӗрлесе юхтарас ӗçре ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Канаш районӗнчи организацийӗнчен.

Анна Семеновна Щипцова—Канаш районӗнчи «Красное пламя» колхозри колхозниксенчен.

373-МӖШ НОМЕРЛӖ УЛАТӐР СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Леонтий Георгиевич Шерстюк—Улатӑр хулинчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Александр Иванович Брейкин — Улатӑрти паровозсем юсакан заводри рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Георгий Алексеевич Алексеев — Йӗпреç районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Татьяна Илларионовна Иванова—Комсомольски районри «Трактор» колхозри колхозниксенчен.

Петр Антонович Лесных—Осоавиахимӑн Улатӑр хули советӗнчен.

Василий Макарович Макаров—Чкаловски районри Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Федор Митрофанович Пшеничный — Улатӑр вӑрманпромхозӗнчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Раиса Александровна Раськина — пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Чкаловски районри организацийӗнчен.

Зейнап Амельдиновна Фейзова—госучреждени работникӗсен профессиллӗ союзӗн Первомайски районри организацийӗнчен.

Анна Лаврентьевна Фролова—Кувакино райпищекомбинатӗнчи рабочисемпе служащисенчен.

Лидия Петровна Шушпанова — Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Пӑрачкав районӗнчи организацийӗнчен.

374-МӖШ НОМЕРЛӖ ÇӖМӖРЛЕ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Вадим Петрович Чернов—Çӗмӗрле районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Дмитрий Иванович Уткин—Калинино районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Михаил Дорофеевич Дорофеев—госучреждени работникӗсен профессиллӗ союзӗн Çӗмӗрле районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Людмила Михайловна Архангельская—Çӗмӗрлери поликлиникӑра ӗçлекен медицина работникӗсенчен.

Николай Сергеевич Балашев—Çӗмӗрлери комбинатра ӗçлекен рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Елизавета Андреевна Волкова—Муркаш районӗнчи «Искра» колхозри колхозниксенчен.

Мария Михайловна Гаврилова—пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Василий Иванович Иванов—Калинино районӗнчи «Первое мая» колхозри колхозниксенчен.

Иван Михайлович Михайлов—Элӗк районӗнчи «Сунтал» колхозри колхозниксенчен.

Исаак Никитич Никитин—Советски районри «За коммунизм» колхозри колхозниксенчен.

Анна Дмитриевна Трофимова — пуçламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗçлекенсен профессиллӗ союзӗн Етӗрне районӗнчи организацийӗнчен.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи ноябрӗн 24-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Национальноçсен Советне Чӑваш АССР-ӗнчен депутатсем суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен округсенчи суйлав комиссийӗсен составне çирӗплетесси çинчен

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 47-мӗш, 48-мӗш тата 49-мӗш статьисем тӑрӑх тата «Национальноçсен Советне суйламалли округсем çинчен» СССР Верховный Совет Президиумӗ 1945 çулхи октябрӗн 16-мӗшӗнче кӑларнӑ Указ тӑрӑх, Чӑваш АССР-ӗнчен Национальноçсен Советне депутатсем суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен округсенчи суйлав комиссийӗсене çак общественлӑ организацисемпе ӗççыннисен обществисен представителӗсене кӗртсе çирӗплетес:

555-МӖШ НОМЕРЛӖ ШУПАШКАР СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Александр Дмитриевич Антонов-Кӑлкан—искусство работникӗсен профсоюзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Александр Валерьянович Плотнов—Чӑвашсен ялхуçалӑх институтӗнчи наука работникӗсенчен тата служащисемпе студентсенчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Ольга Николаевна Игнатьева — Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Алевтина Петровна Вишнякова—Шупашкарти чӑлха фабрикинчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Валентин Григорьевич Елагин—Сӗнтӗр районӗнчи 1905 çулхи Революци ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Владимир Иванович Зорин — вӑрманпа сулӑ работникӗсен профсоюзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗчен.

Алевтина Игнатьевна Игнатьева—Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан çӗвӗ фабрикинчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Агриппина Евдокимовна Отнюшкова — пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Ишлей районӗнчи организацийӗнчен.

Агриппина Андреевна Майорова—Сӗнтӗрти пир-авӑр фабрикинчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Елена Афанасьевна Смирнова—Ишлей районӗнчи «Гвардия» колхозри колхозниксенчен.

Сергей Афанасьевич Соколов—Сӗнтӗр районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

556-МӖШ НОМЕРЛӖ ШУПАШКАР ЯЛ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Александра Александровна Митрофанова—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Михаил Николаевич Коранов—госучреждени работникӗсен профсоюзӗн Шупашкар районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Таисия Андреевна Андреева — Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Александр Иванович Васильев—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Трофим Георгиевич Вольский—Октябрьски районри Киров ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Петр Егорович Егоров—Шупашкар районӗнчи «Память Ленина» колхозри колхозниксенчен.

Мария Ивановна Иванова—пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Шупашкар районӗнчи организацийӗнчен.

Мария Ивановна Осипова—пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи организацийӗнчен.

Илья Архипович Охильков—Октябрьски районри Сталин ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Михаил Иванович Чернов—Сӗнтӗрвӑрринчи Наркомморфлотӑн судоверфӗнчи рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Андрей Яковлевич Чечнев—Шупашкар районӗнчи «Осоавиахим» колхозри колхозниксенчен.

557-МӖШ НОМЕРЛӖ ÇӖРПӲ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Федор Павлович Романов—Чурачӑк районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Николай Гаврилович Скворцов—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Красноармейски районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Роман Семенович Афаньев—Çӗрпӳри ялхуçалӑх техникумӗнчи преподавательсемпе служащисенчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Ефросиния Тимофеевна Абрикосова — МТС-па çӗрӗç органӗсенчи работниксен профсоюзӗн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен.

Андрей Емельянович Емельянов—госучреждени работникӗсен профсоюзӗн Чурачӑк районӗнчи организацийӗнчен.

Екатерина Ивановна Иванова—Красноармейски МТС-ри рабочисемпе служащисенчен.

Дария Лукинична Лукина—Чурачӑк районӗнчи «Красный самолет» колхозри колхозниксенчен.

Николай Павлович Павлов—Красноармейски районри Калинин ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Георгий Осипович Скворцов—Çӗрпӳ районӗнчи «Чӑваш ЦИК» колхозри колхозниксенчен.

Николай Христофорович Христофоров — пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Çӗрпӳ районӗнчи организацийӗнчен.

Сергей Христофорович Христофоров — Шӑхасан районӗнчи Куйбышев ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

558-МӖШ НОМЕРЛӖ ВӐРМАР СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Михаил Иванович Бойков—Вӑрмар районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Григорий Вячеславович Слуцкий—Куславкка комбинатӗнчи рабочисенчен, служащисемпе инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Константин Павлович Павлов—пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Вӑрмар районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Анна Абрамовна Абрамова — Вӑрмарти Спортинвентарь фабрикинчи рабочисенчен, служащисемпе инженерсенчен.

Василий Алексеевич Алексеев—Вӑрмар районӗнчи «Большевик» колхозри колхозниксенчен.

Иван Григорьевич Григорьев — Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхозри колхозниксенчен.

Тамара Федоровна Морскова—политпросвет учрежденийӗсенчи работниксен профсоюзӗн Куславкка районӗнчи организацийӗнчен.

Мингаз Низамутдинович Низамутдинов—Куславкка районӗнчи «Кзыл-Куч» колхозри колхозниксенчен.

Зоя Сергеевна Портнова—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Тӑвай районӗнчи организацийӗнчен.

Акулина Семеновна Семенова—Вӑрмарти Спортинвентарь фабрикинчи рабочисенчен, служащисемпе инженерсенчен.

Евдокия Петровна Цыганова—Куславкка комбинатӗнчи рабочисенчен, служащисемпе инженерсенчен.

559-МӖШ НОМЕРЛӖ КАНАШ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Василий Яковлевич Ямпольский — Канаш хулинчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Иван Андреевич Налимов—Хусан чугун çулӗ çинчи Канаш станцийӗнчи рабочисенчен, служащисемпе инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийӗн секретарӗ Ксения Николаевна Николаева—пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Тӑвай районӗнчи организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Вера Алексеевна Алексеева—медицинӑпа санитари работникӗсен профсоюзӗн Канаш хулинчи организацийӗнчен.

Иван Архипович Дубовой — Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисенчен тата служащисемпе инженерсенчен.

Павал Евлампьевич Евлампьев—Шӑхасан районӗнчи «Трактор» колхозри колхозниксенчен.

Григорий Иванович Иванов—Тӑвай районӗнчи Мичурин ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

Евграф Иванович Иванов—пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи работниксен профсоюзӗн Канаш районӗнчи организацийӗнчен.

Елена Александровна Каштатова—Пӗтӗм Союзри Çамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Канаш хулинчи организацийӗнчен.

Зоя Петровна Осанова — Канаш районӗнчи «Красная звезда» колхозри колхозниксенчен.

Сергей Филиппович Филиппов—Канаш районӗнчи Доронин ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксенчен.

560-МӖШ НОМЕРЛӖ ЙӖПРЕÇ СУЙЛАВ ОКРУГӖ ТӐРӐХ

Округри суйлав комиссийӗн председателӗ Николай Матвеевич Матвеев—Йӗпреç районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен.

Округри суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ Евгения Логиновна Колькина —пуçламӗш тата вӑтам шкулсенчи ра-

(Малалли 2-мӗш страницӑра)

Армян ССР Верховный Совечӗн Президиумне Армян ССР Халӑх Комиссарӗсен Советне Армениri Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитетне

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ Совет Арменийӗ 25 çул тултарнӑ кун Армянсен Советлӑ Социализмлӑ Республикинчи рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцие саламлаççӗ.

1920 çулхи ноябрь уйӑхӗнче Арменири ӗççыннисем, вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе, дашнаксен халӑха хирӗç пыракан реакциллӗ правительствине сирпӗтсе ячӗç те Совет влаçӗ туса хучӗç. Совет йӗркипе пур ӑнса, Армени ирӗклӗн ӳссе пыма тата нацисенчен аталанса пыма май тупрӗ. Кавказ леш енчи халӑхсем пӗр-пӗринпе туслӑн та килӗштерсе пурӑнма пуçларӗç.

Совет влаçӗ вӑхӑтӗнче Армениri ӗççыннисем, коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, малта тӑракан социализмлӑ республика, вӑйлӑ аталаннӑ промышленноçлӑ, колхоз ялхуçалӑхлӗ тата вӑйлӑ ӳссе кайнӑ культурӑллӑ республика туса хучӗç. Республикӑра çакӑн пек пысӑк предприятисем туса лартрӗç: Алавердрипе Кафанри пӑхӑр комбиначӗсем, Кироваканри тата Алавердри ялхуçалӑх удобренийӗсем тӑвакан заводсем, Ереванри станок завочӗ, Ленинаканри пир-авӑр комбиначӗ, апатçимӗç предприятийӗсем, Канакирти электростанци, Дзорагэс тата колхозсечӗ нумай гидростанцисем тунӑ.

Колхоз йӗрки Арменири ялхуçалӑхне йӑлтах улӑштарчӗ, вӑйлӑ аталантарчӗ. Хирсене шӑвармалли сооруженисем тӑвас тӗлӗшпе пысӑк ӗçсем тунӑ. Шӑваракан çӗр лаптӑкӗ 200 пин гектар таран ӳсрӗ. Виноград, садсем ӗрчетес ӗçре тата шӑрӑх çӗрсенче ӳсекен ӳсентӑрансемпе техникӑлла культурӑсене лартса ӳстерес ӗçре колхозсемпе совхозсем чылай пысӑк çитӗнӳсем турӗç.

Армян халӑхӗн культури чечекленсе ӳссе кайрӗ. Октябрьти революциччен Арменире мӗнпурӗ те 446 пуçламӗш шкулпа 7 вӑтам шкул çеç пулнӑ. Халӗхи вӑхӑтра республикӑра 869 пуçламӗшпе тулли мар вӑтам шкул, 300 вӑтам шкул, 48 техникум, 13 аслӑ шкул, 43 тӗпчев институчӗ тата Наука академийӗ пур. Армян ССР-ӗнчи писательсем, поэтсем, художниксем, композиторсем литературӑпа искусствӑн калама çук чаплӑ произведенийӗсене çырса хучӗç.

Отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче армян халӑхӗ Тӑван çӗршыв умӗнчи хӑйӗн тивӗçне чыслӑн пурнӑçларӗ. Армян воинӗсем, Совет Союзӗнчи ытти халӑхсемпе пӗрле кӗрешсе, хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне паттӑррӑн хӳтӗлесе тӑчӗç. Арменири рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци тӑшмана çӗнтерес тесе ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлерӗç.

Армени хуçалӑхӗпе культурине малалла аталантарас ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тӑвассишӗн, Совет государствин хӑватне тата ытларах çирӗплетессишӗн Армени ССР-ӗнчи ӗççыннисем малашне те хастарлӑн ӗçлесе тӑрассине ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ çирӗп шанса тӑраççӗ.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ. ВКП(б) Центральный Комитечӗ.

Анастас Иванович Микояна

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Эсир 50 çул тултарнӑ кун Сире, Сталин юлташӑн шанчӑклӑ соратникне, партипе Совет государствин çав тери паллӑ деятельне, хӗрӳллӗн саламлаççӗ.

Эсир мӗн çамрӑкранпах рабочи класӗн ӗçӗшӗн, коммунизмшӑн революциллӗ кӗрешсе пурӑнтӑр. Кавказ леш енче, Чулхулара тата Çурçӗр Кавказра парти ӗçӗнче ӗçлесе, СССР Халӑх Комиссарӗсен Советӗнче ӗçлесе, партипе государство ӗçӗсенче пуринче те Эсир парти лартнӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑçласа пытӑр. Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑ вӑхӑтӗнче Эсир, социализмлӑ хуçалӑха çав тери чаплӑ ертсе пыракансенчен пӗри пулса тӑрса, хӑвӑрӑн большевикла вӑйӑрпа хастарлӑн ӗçлесе, тӑшмана çӗнтерес ӗçе ӑнӑçлӑн пулӑшса пытӑр.

Хаклӑ Анастас Иванович, хамӑрӑн Тӑван Совет çӗршывӗн ырлӑхӗшӗн малашне те нумай çулсем хушши ӑнӑçлӑ ӗçлесе пурӑнма Сире сывлӑх сунатпӑр.

ВКП(б) Центральный Комитечӗ. СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

А. И. Микоян юлташа Ленин орденӗпе наградӑласси çинчен

СССР Совнаркомӗн Председатель Заместителӗ тата Тулашри Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ А. И. Микоян юлташ 50 çул тултарнӑ май тата вӑл партипе совет халӑхӗ умӗнче çав тери паха ӗçсем тунине шута илсе, Анастас Иванович Микоян юлташа Ленин орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи ноябрӗн 24-мӗшӗ.

ВКП(б) Обкомӗнче

КĂÇАЛХИ НОЯБРӖН 25-МӖШӖПЕ ДЕКАБРӖН 25-МӖШӖ ХУШШИНЧЕ ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРМАЛЛИ УЙĂХЛĂХ ПУЛАТЬ

1945 çулхи IV-мӗш кварталти финанс планне тултарас тесе тата парти, совет тата финанс органӗсене çав плана тултарас тӗлӗшпе лайӑхрах ӗçлемелле тӑвас тесе, ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑçалхи ноябрӗн 25-мӗшӗпе декабрӗн 25-мӗшӗ хушшинче 1945 çулхи IV-мӗш кварталти финанс планне тултармалли уйӑхлӑх тума йышӑннӑ.

Вӑрнар районӗнчи финанс работникӗсем илнӗ ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕМ

Вӑрнар районӗнчи финанс работникӗсем ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑçалхи IV-мӗш кварталти финанс планне тултармалли уйӑхлӑх тӑвасси çинчен йышӑннӑ решение сӳтсе-явса, çав уйӑхлӑха активлӑн хутшӑнма йышӑннӑ тата çакӑн пек обязательствӑсем илнӗ:

Сталинла Конституци кунӗ тӗлне—декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне—IV-мӗш кварталта укçа-тенкӗ пухалли плана пур тӗрлӗ тӳлевсем тӗлӗшпе те сахалтан та 90 процент тултарма, ку шутра налогсен тӳлевӗсенӗпе плана 92 процент тултарма;

IV-мӗш квартал планне пӗтӗм районӗпе декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне тултарма;

пур тӗрлӗ обязательнӑй тӳлевсем тӑрӑх та парса татман парӑмсене декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне парса татма;

Государствӑн Тӑваттӑмӗш Военнӑй Заемӗшӗн пухмалли укçа-тенке IV-мӗш кварталта пӗтӗмпех пухса çитерме.

Вӑрнар районӗнчи финанс работникӗсем республикӑри пур финанс работникӗсене те хӑйсенчен пример илсе, уйӑхлӑха активлӑн хутшӑнма тата 1945 çулхи IV-мӗш кварталти финанс планне срокчен тултарма чӗнсе каланӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

ОКТЯБРЬ УЯВӖ УМӖНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУРА МАЛА ТУХНĂ ФИНАНС ОРГАНӖСЕНЕ ПРЕМИ ПАНИ

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва пуçласа янӑ Çӗрпӳпе Сӗнтӗрвӑрри районӗсенчи финанс работникӗсем хӑйсен обязательствисене чыслӑн тултарчӗç.

Социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса Красноармейски, Шӑхасан, Елчӗк, Вӑрнар, Чурачӑк, Ишлей, Вӑрмар, Тӑвай районӗсем лайӑх ӗçлерӗç.

Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Çӗмӗрле, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Комсомольски, Первомайски, Улатӑр, Элӗк, Калинино районӗсенчи финанс работникӗсем начар ӗçленӗ, IV-мӗш кварталти плана 40 процентран та сахалтарах тултарнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту итогӗсене пӑхса тухса, хӑйсен обязательствисене ирттерсе тултарнӑшӑн Çӗрпӳ финанс пайне 10.000 тенкӗ, Сӗнтӗрвӑррипе Красноармейски районӗсенчи финанс пайӗсене 7.500-шер тенкӗ, Елчӗк Вӑрнар тата Чурачӑк районӗсенчи финанс пайӗсене 5.000-шер тенкӗ преми панӑ. Çав премин укçисене лайӑх ӗçлекен финанс работникӗсене валеçсе пама хушнӑ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Национальноçсен Советне Чăваш АССР-ĕнчен депутатсем суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетесси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

ботниксен профсоюзĕн Первомайски районри организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Яков Максимович **Цветков**—Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Ольга Матвеевна **Бабаева** — Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхозри колхозниксенчен.

Филипп Гаврилович **Гаврилов**—Первомайски районри «Большевик» колхозри колхозниксенчен.

Григорий Федорович **Давыдов**—Шăмăршă районĕнчи «Новая деревня» колхозри колхозниксенчен

Анастасия Алексеевна **Егорова**—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Йĕпреç районĕнчи организацийĕнчен.

Степан Николаевич **Кузнецов**—пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн Йĕпреç районĕнчи организацийĕнчен.

Анастасия Егоровна **Лазарева**—вăрман касса сулă юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсен профсоюзĕн Шăмăршă районĕнчи организацийĕнчен.

Петр Маркиянович **Маркиянов**—Йĕпреç МТС-ĕнчи рабочисемпе служащисенчен.

Александр Трофимович **Тазенов**—Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» колхозри колхозниксенчен.

561-МĔШ НОМЕРЛĔ ЧКАЛОВСКИ СУЙЛАВ ОКРУГĔ ТĂРĂХ

Округри суйлав комиссийĕн председателĕ Иван Георгиевич **Георгиев**—Комсомольски районри коммунистсен организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ Федор Николаевич **Чернов**—Комсомольски районри Осоавиахим организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн секретарĕ Илья Николаевич **Николаев**—пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн Чкаловски районри организацийĕнчен.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем:

Давид Александрович **Акчурин**—Комсомольски районри «Красный Октябрь» колхозри колхозниксенчен.

Алексей Андреевич **Андриянов**—Елчĕк районĕнчи «Новый путь» колхозри колхозниксенчен.

Хуснетдин Сейфутдинович **Булатов** — Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхозри колхозниксенчен.

Мария Порфирьевна **Мазова** — Комсомольски районри «Мурат» колхозри колхозниксенчен.

Константин Тимофеевич **Мартынов** — Елчĕк районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

Петр Максимович **Симуков** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Чкаловски районри организацийĕнчен.

Олимпиада Михайловна **Сорокина**—пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн Чкаловски районри организацийĕнчен.

Елизавета Порфирьевна **Толстова**—Елчĕк районĕнчи «МОПР» колхозри колхозниксенчен.

(Юлашки пулать).

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Наркомземĕнче

ÇАМРĂК СУХАÇĂСЕМПЕ ТРАКТОРИСТСЕН 1945 ÇУЛТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ТĔЛĔШПЕ ПЫНĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ АМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçри ăмăртăва пурĕ 5.387 çамрăк сухаçăпа тракторист хутшăннă, вĕсен шутĕнче 2.243 комсомолец.

Вăрнар, Калинино, Çĕрпӳ, Елчĕк, Шăхасан, Вăрмар тата Чкаловски районсенчи комсомолецсемпе çамрăксем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнă.

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн **Н. П. Порфирьев** (Елчĕк МТС-ĕ), **З. В. Викторова** (Калинино МТС-ĕ) трактористсене; **А. К. Кузьмин** (Вăрмар районĕнчи «Свобода» колхоз), **М. С. Сапожников** (Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз), **М. В. Викторова** (Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз), **М. А. Антонова** (Чурачăк районĕнчи «Трактор» колхоз) çамрăк сухаçăсене 500-шер тенкĕ преми пама йышăннă

П. Т. Шайкин (Чкаловски МТС), **В. П. Истомин** (Октябрьски МТС), **М. С. Сергеева** (Ишлей МТС-ĕ), **М. Кузнецова** (Красноармейски МТС) трактористсене; **Н. П. Петров** (Чурачăк районĕнчи «1-ое мая» колхоз), **М. А. Ананьева** (Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз), **В. Н. Николаев** (Вăрмар районĕнчи «Свобода» колхоз), **М. Е. Чернов** (Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз), **Н. И. Леонтьев** (Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз), **Я. С. Васильев** (Сĕнтĕр районĕнчи «Ударник» колхоз), **М. И. Белебешев** (Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхоз), **Н. И. Коновалов** (Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз), **Г. Павлов** (Вăрнар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз), **А. Ферапонтов** (Çĕрпӳ районĕнчи «Красный бригадир» колхоз), **В. Е. Егоров** (Тăвай районĕнчи «Пламя» колхоз), **В. С. Сергеев** (Калинино районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз) тата **Н. П. Сайкин** (Елчĕк районĕнчи «Хунав» колхоз) çамрăк сухаçăсене 250-шер тенкĕ преми пама йышăннă.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре çамрăк сухаçăсен социализмлă ăмăртăвне лайăх организацилесе ертсе пынăшăн, çавна май кĕрхи çĕртме тумалли государство планне ытлашшипех тултарнăшăн, Елчĕк МТС-ĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен трактор бригадин бригадирне **Г. Н. Стрункова**, Вăрнар МТС-ĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен трактор бригадин бригадирне **Г. И. Мишакова** тата Вăрмар районĕнчи «Свобода» колхозри ВЛКСМ комитечĕн секретарне **В. Матросова** 500-шер тенкĕ преми памалла тунă.

Чурачăк районĕнчи «Трактор» колхозри ВЛКСМ комитечĕн секретарне **А. А. Алексеева**, Çĕрпӳ МТС çумĕнчи комсомол комитечĕн секретарьне **Т. И. Иванова** тата Чкаловски районри Нариман ячĕпе тăракан колхозри ВЛКСМ комитечĕн секретарьне **К. А. Абдулазанова** 250-шер тенкĕ преми пама йышăннă.

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Комсомольски, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Элĕк тата Улатăр районĕсенчи çĕрĕç пайĕсемпе ВЛКСМ райкомĕсем çамрăк сухаçăсемпе трактористсен кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвне çителĕксĕр ертсе пынине палăртнă.

Францири Учредительнăй пухăвăн ларăвĕ

ДЕ ГОЛЛЬ ТУХСА КАЛАНИ

ПАРИЖ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС корреспонденчĕ телефонпа пĕлтерни). Паян 17 сехетре Учредительнăй пухăвăн ларăвĕ уçăлчĕ. Вăл çĕнĕ правительствăн программине сӳтсе-яврĕ. Ларура пур делегатсем те пулчĕç. Министрсем те пурте пулчĕç. Министрсен пĕрремĕш тенкелĕ çинче де Голль, Морис Торез, Франсиск Гэ ларассĕ. Правительство программи çинчен кĕскен де Голль генерал каласа пачĕ.

«Халăх пĕрлĕхĕн правительстви, эпĕ ертсе пыраканскер,—терĕ де Голль, — хăйĕн йышĕ енчен пăхсан, халăх пĕрлĕхĕ çĕнтерпипе пĕлтерет». Де Голль çапла каларĕ: правительство кĕске вăхăтрах кредит учрежденийĕсене, электричество энергийĕ тăвас ĕçе, хăшпĕр страховой компанисене национализацилеме шутлать.

Унтан де Голль правительство умĕнче тăракан çак задачăсем çинчен каларĕ: государство администрацине, суда, наци оборонине урăхла йĕркелесси çинчен, промышленность продукцийĕ ытларах туса кăларасси çинчен, служащисемпе рабочисен пурнăçне лайăхлатасси çинчен, ишĕлнĕ хуласене юсасси çинчен тата колонисене аталантарасси çинчен каларĕ.

Çĕнĕ правительство умĕнчи тулашри политикăллă задачăсем çинчен де Голль çапла каларĕ: çак правительство коллективлă хăрушсăрлăх политикине тытса пырĕ, терĕ. «Кашни государство хăрушсăрлăхра пурăнса чечекленсе ӳссе пырасси пур государствăсем те хăрушсăрлăхра пурăнса чечекленсе ӳссе пырассинчен килет. Франци Пĕрлешнĕ нацисен организацине туса аталантарса пырас ĕçе хутшăнĕ»,—терĕ де Голль.

Малалла де Голль çапла каларĕ: Франции Хĕвеланăçпе те, Хĕвелтухăçпе те сыхăнса тăмалла: Францийпе Совет Союзĕ хушшинче вĕсене хирĕçтерекен интерессем çук, терĕ. Вăл Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе туслăн пурăнма кирлине асăнчĕ. Де Голль тата Англипе таччăнрах сыхăнса кирли çинчен каларĕ, пире Англипе çĕр чăмăрĕн нумай пайĕсенче пĕр пек интерессем сыхăнтарса тăраççĕ, терĕ; тата Голландипе, Бельгипе, Люксембургпа, Вăтаçĕрти Европăри государствăсемпе, Балканри çĕршывсемпе тата Италипе таччăнрах сыхăнмалли çинчен каларĕ. Франци, терĕ малалла де Голль, «Испани демократиллĕ çул çине тăрсан, унпа таччăн сыхăнĕ».

Юлашкинчен де Голль çапла каларĕ: «Çак мĕнпур задачăсене пурнăçа кĕртмешкĕн Францие унăн мĕнпур ывăлĕсем пулăшмалла», терĕ.

ФРАНЦИРИ УЧРЕДИТЕЛЬНĂЙ ПУХУ ПРАВИТЕЛЬСТВĂНА ШАНКА

ПАРИЖ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: паян де Голль кĕске сăмах тухса каланă хыççăн Учредительнăй пуху правительствăна шанни çинчен калакан резолюцие пĕрсаслăн йышăннă

ЭТТЛИ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Премьер-министр Эттли общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Вăл Вашингтонра атом энергийĕпе усă курасси пирки калаçни çинчен каласа панă.

Историри опыт çине кăтартса, Эттли çапла каланă: «Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, хăшпĕр йышши хĕçпăшалпа усă курма чарнинчен нимĕн те тухмарĕ». Эттли каланă тăрăх, çавăнпа «халăхсем хушшинче закон пуçпулса тăрассине сыхласа тăма тата вăрçă тенĕ инкеке çĕр пичĕ çинчен шăлса тасатма питĕ кирлине кашни наци лайăххах ăнланса илет».

«Эпир малашне Пĕрлешнĕ нацисен организацине хирĕç тухса кĕтсе илĕпĕр,—тенĕ Эттли. Çав организаципе усă курма пурте питĕ хытă тăрăшсан, вăл закон пуçпулса тăрас йĕркене туса хума тата вăрçă таврашне сирсе яма пулăшакан инструмент пулса тăрĕ. Çав организаципе усă курма пурте питĕ хытă тăрăшсан, терĕм эпĕ, мĕншĕн тесен, ман шутăпа, ыйту шăп çакăнта тăрать. Ырă кăмăл çук пулсан хĕçпăшала тĕрĕслемелли нимĕнле система та усăллă пулман пекех, нацисем вăрçа политика орудийĕ вырăнне хурса унпа усă курма пăрахас темесессĕн, пĕр-пĕрне вăрçă пуçланмалла мар таран шанма шут тытмасассăн, пĕтĕм тĕнчери нимĕнле организаци те, чи тĕплĕ тухăшласа туни те, нимĕнле усă та памĕ».

Пĕр-пĕрне шанни кирлĕ тесе тепĕр хут каласан тата çĕр чăмăрĕн хăш пайĕнче пĕр-пĕрне шанма пуçлани çинчен каласа парсан (Эттли кунта Англие, Канадăна тата Пĕрлешӳллĕ Штатсене аса илнĕ), Эттли малалла çапла каланă: наукăри открытисемпе мирлĕ пурнăçра тата вăрçă ĕçĕнче мĕнле майпа усă курма пурри çинчен «пĕтĕм тĕнчене наукăри хыпарсем çинчен ахаль чухне пĕлтерекен йĕркепех» пĕлтерме ыйтнине эпĕ ăслă тесе калама пултараймастăп, тенĕ.

ИРАН АЗЕРБАЙДЖАНĔНЧИ ПĔТĔМ ХАЛĂХ ПУХĂВĔ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Тавриз хулинче Иран Азербайджанĕнче пĕтĕм халăх пухăвĕ пулса иртнĕ. Çав пухура 744 делегат пулнă, вĕсем Иран Азербайджанĕнчи пур районсенчен те пынă.

Пĕтĕм халăх пухăвĕн пĕрремĕш ларăвне ноябрĕн 20-мĕшĕнче чи ватă делегат Галджи Азим-хан уçнă, вăл Иран Азербайджанĕнчи демократиллĕ юхăмăн чи паллă деятелĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Пуху питĕ пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Пухăва Тавриз халăхĕн пур сийĕсен представителĕсем те саламланă: вырăнти интеллигенцин, купсасен, духовенствăн, çарăн тата хĕрарăм организацийĕсен представителĕсем те саламланă.

Иран Азербайджанĕнчи пĕтĕм халăх пухăвне пухас умĕн провинцири хуласенче йышлă çынлă митингсемпе пухусем пулса иртнĕ. Çав митингсемпе пухусенче пĕтĕм халăх пухăвне кайма делегатсем суйланă. Резайе хулинче делегатсем суйламалли пухăва 5.000 çын пынă, Хой хулинче 2.000 çын, Шахпулта — 3.000 çын, Марагра—2.000 çын ытла, Марандăра—2.000 çын ытла, Ахарта—15.000 çынна яхăн, Тавризра—темиçе вунă пин çын пулнă. Çав пухусенче пуринче те пĕтĕм халăх пухăвне пухнине ырлакан резолюцисем йышăннă тата Иран конституцийĕнче кăтартнă пек анджуменсене—вырăнти самоуправлени органĕсене—суйламашкăн ирĕк пама ыйтнă.

Иран Азербайджанĕнчи пĕтĕм халăх пухăвĕ Çурçĕр Иранри азербайджан халăхне чăн-чăн самоуправлени пама ыйтса резолюцисем йышăннă.

ИНДИРЕ ДЕМОНСТРАЦИСЕНЕ ПĂШАЛСЕМПЕ ПЕНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 21-мĕшĕнче Калькутта хулинче полици демонстрацие пăшалсемпе пенĕ. Çав демонстрацире 2.000 студент пулнă. Миçе çын вилни çинчен калакан хыпарсем çитмен-ха.

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Калькутта хулинче полици 5 минут сиктерсе икĕ хутчен демонстрантсен пысăк ушкăнне пăшалсемпе пенĕ. Икĕ çынна вĕлернĕ, 60 çынна ытла амантнă. Çав демонстраци ноябрĕн 21-мĕшĕнче пулнă демонстрацирен пысăкрах пулнă. Çынсене пăшалсемпе пенĕ хыççăн магазинсене хупнă, урам тăрăх çӳреме чарса лартнă.

АНГЛИН ЛĂПКĂ ОКЕАНРИ ФЛОТНЕ АВСТРАЛИРЕН СИНГАПУРПА ГОНКОНГА КУÇАРАÇÇĔ

СИДНЕЙ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Австрали премьер-министрĕ Чифли ноябрĕн 19-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Англин Лăпкă океанри флотне Австралирен Сингапурпа Гонконга куçараççĕ. Австралири аэродромсем, юсав мастерскойĕсем, казармăсем тата складсем майĕпен сахалланса пырĕç, администрациллĕ работниксен хисепĕ чакса пырĕ, тенĕ.

КАРПАТ ЛЕШ ЕНЧИ УКРАИНА ÇИНЧЕН СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ТУНĂ ДОГОВОРА ÇИРĔПЛЕТНĔ

ПРАГА, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Чехословакин вăхăтлăх халăх пухăвĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн тата конституци комиссийĕн доклачĕсене итленĕ. Çав докладсенче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Чехословаки республики Карпат леш енчи Украина çинчен тунă договора, кăçалхи июнĕн 29-мĕшĕнче Мускавра алă пуснăскерне, çирĕплетесси çинчен каланă. Ларура темиçе депутат тухса каланă, вĕсем пурте çав договора ырланă. Вара Чехословакин вăхăтлăх халăх пухăвĕ çав договора пĕрсаслăн çирĕплетнĕ.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 23-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Судăн тăваттăмĕш кунĕнчи ирхи ларăвĕнче малтан айăплакан Кейтеле хӳтĕлекен Ноэль сăмах тухса каланă. Ноэль çапла каланă: импери оборонин совечĕ тата вăрттăн совет пулман, çавăнпа та Кейтель çав организацисен членĕ пулма пултарайман, тенĕ. Ноэль судран хăйĕн заявленине халех пăхса тухма ыйтнă.

Судья Лоуренс ăна çапла ăнлантарса панă: сирĕн заявление ĕç çумне хушса хума пулать, анчах та ăна суд вăхăт çитсен çеç пăхса тухĕ, тенĕ.

Хӳтĕлекенсем ялан: айăпласа çырнин никĕсне хунă документсем пирĕн алăра çук, тесе каланă пирки, Америка енчен айăплакансен представителĕ вĕсене çапла асăрхаттарать: документсен пур списокĕсене те тахçанах хӳтĕлекенсен аллине панă, ку çеç те мар, çав документсем пурте хӳтĕлекенсен аллинче хăйне уйрăм пӳлĕмре выртаççĕ, тет. Вăл уйрăм айăпланакансене хирĕç калакан документсем ăçта тата мĕнле йĕркепе выртни çинчен тĕплĕн кăтартса парать.

Унтан майор Уоллес хăйĕн айăплакан сăмахне йышлă документсемпе çирĕплетсе калать. Вăл гитлерла каварлашуçăсем вăрçă валли çынсем мĕнле хатĕрленине тĕплĕн каласа парать.

Влаçа хăйсен аллине тытса илсен, тет майор Уоллес, нацистсем хăйсен вăрçă планĕсене пурнăçа кĕртме кирлĕ çынсем хатĕрлес задача лартнă. Çак шутпа вĕсем Германири çамрăк ăрăва вĕрентсе ӳстерес ĕçе хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Вĕсем халăха вĕрентес ĕçе тĕпренех улăштарнă, вĕсем çав ĕçрен çамрăксене нацистла вĕрентмелли хатĕр туса хунă. Нимĕç ачисем мĕн çамрăкран пуçласа çара каймалла пуличчĕнех нацистсен воспитателĕсен çирĕп те хаяр аллисенче тăнă. 1933 çултах, нацистсем влаçа хăйсен аллине тытса илнĕ хыççăнах, Гитлер ачасен ашшĕ-амăшĕсене çапла каланă: «Сирĕн ачăрсем манăн алăра», тенĕ. Çавăн хыççăн тăватă çул иртсен, 1937 çулта, Гитлер çамрăксене вара çапла калама пултарнă: «Çĕнĕ импери сире хăйĕн аллине илет!», тенĕ. Нацистсем пур учебниксене те улăштарнă, ачасене унччен нимĕнле вĕрентес вырăнне, вĕсене ытти халăхсене пурне те кураймасăр пурăнма вĕрентнĕ. Вĕсем кунпа та кăнăçман, вĕсем тата, уйрăм закон кăларса, пур шкулсенче те нацистла организацисем туса хунă. Нацистсем çамрăк нимĕçсене мĕн çуралнăранпах тата университетран вĕренсе тухиччен хăйсен шухăшĕсене вĕрентнĕ, вĕсен пуçĕсене пĕртен-пĕр ĕмĕтпе—пĕтĕм тĕнчери мĕнпур халăхсен хуçи пулса тăрас ĕмĕтпе тултарнă. Шкулсăр пуçне Гитлер тата «гитлерла çамрăксем» («гитлерюгенд») ятлă хăйне уйрăм организаци туса хунă. Айăпланакан Вальдур фон Шираха çав организацин пуçлăхĕ туса хунă. «Гитлерюгенд» нимĕç çамрăкĕсене нацистла вĕрентнĕ çеç мар, вăл тата çамрăксене çарпа çурма çар организацийĕсенче вĕрентсе çара кайма хатĕрленĕ. 1940 çул тĕлне çав организацире 7 миллион çын ытла пулнă. Вĕсене вăрçă этемĕн чи ырă ĕçĕ пулса тăрать, тесе вĕрентнĕ. Ĕç кунта нимĕç çамрăкĕсене вăрçă пуçлама шухăш-кăмăл енчен хатĕрленипе çеç пĕтмен, гитлерла çамрăксем хăйсен уйрăм чаçĕсенче—мотомеханизированнăй чаçсенче тата авиаципе тинĕс чаçĕсенче—хăйсен темиçе çĕр пин членне çарта активлăн ĕçлеме хатĕрленĕ.

Айăплакансен представителĕ трибунала питĕ простой, анчах та нумая пĕлтерекен документ парать. Çав документ—гитлерла организацисен диаграмми. Ăна Гитлер партийĕн историне вĕрентмелли официальнăй кĕнекен 15-мĕш страницинче пичетленĕ пулнă. Çав диаграмма çамрăк нимĕçсене нацистла ухмахлантармалли организацисене кăтартса парать. Чи аялта—чи çамрăк ачасен «юнгфольк» ятлă организацийĕ тăнă. Çав организацире тăнă хыççăн ачасем Адольф Гитлер шкулĕ текен шкулсене лекнĕ. Вĕсенчен вĕренсе тухсан, «гитлерла çамрăксем» текен организацие кĕнĕ. 18 çула çитсен, çамрăк гитлеровецсем Гитлер партийĕн организацийĕсене—СС е СА ятлă организацисене (хурал отрячĕсемпе штурмовой отрядсене) кĕнĕ. 20 çула çитсен, ĕç лагерĕсенче ĕç повинноçĕ йĕркипе ĕçлесе тăнă вăхăтра «рабочи фронт» аллине лекнĕ. Çав лагерьсенчен вĕсем çара кайнă. Çарта икĕ çул пурăннă хыççăн каллех хурал отрячĕсене, е штурмовой отрядсене, е Гитлер партийĕн ытти организацийĕсене таврăннă. Çамрăксене çав пусмасем тăрăх хăпартса пырса, гитлеровецсен пуçлăхĕсем вăл çынсенчен чи юрăхлисене хăйне уйрăм ĕç ĕçлеме уйăрса илнĕ. Çавăнпа çав пусмасен чи çӳлти сыпăкĕнче «халăх руководителĕсен шкулĕ» ятлă шкулсем, урăхла каласан, гитлерла чиновниксемпе пуçлăхсен шкулĕсем тăнă. Çамрăксене гитлерла ухмахлантармалли çак аппарат пĕтĕм тĕнчене хирĕç вăрçăпа тухма кирлĕ çынсем хатĕрлеме пулăшнă. Ăнсăртран мар ĕнтĕ Гитлер 1938 çулта çапла каланă: «Халĕ ĕнтĕ пирĕн хамăр плансене пурнăçа кĕртмелли вăй пур», тенĕ. Çынсене шухăш-кăмăл енчен вăрçа хатĕрлемелли тĕп май—пропаганда пулнă.

Айăпланакансене хӳтĕлекенсем каллех тавлашма тытăнаççĕ. Айăпласа çырнин çак пайĕн никĕсне хунă документсене пире паман пирки, эпир айăпланакансене иепле те хӳтĕлеме пултараймастпăр, теççĕ вĕсем. Тĕрĕссипе илсен, айăпласа çырнин çав пайĕнче айăпланакансен сăмахĕсемпе статьисем çинчен каланă.

Айăплакан тепĕр хут çапла калать: айăпласа çырнă хутра кăтартнă документсене пурне те хӳтĕлекенсене панă, тет. Хӳтĕлекенсем каллех документсене икĕ чĕлхепе çырса пама ыйтаççĕ. Заукеле хӳтĕлекен Серватиус çав пур документсене те нимĕç чĕлхипех пама ыйтать, кунсăр пуçне тата çав документсене акăлчанла куçарнине пама ыйтать; пирĕн вăл документсене тĕрĕс куçарнипе куçарманнине пĕлмелле, тет.

Кунсăр пуçне, хӳтĕлекенсем çав документсем çинчен акăлчан чĕлхипе ăнлантарса çырса пама ыйтаççĕ, çавăн пек çырнине тата нимĕçле куçарса памалла, теççĕ.

Айăплакансен представителĕ çапла калать: хӳтĕлекенсем ыйтакан документсем «Райхсгезетцблаттра» («Импери законĕсен ведомоçĕнче»), тет, çав ведомоçсем хӳтĕлекенсен аллинче пур, тет.

Кĕске вăхăт хушши перерыв тунă хыççăн Америка енчен айăплакансен представителĕ трибунала çак айăпланакансем вăрçа экономика енчен мĕнле хатĕрленни çинчен тĕплĕн каласа парать. Вăрçа экономика енчен хатĕрлес ĕçе айăпланакансем Шахт, Геринг тата Функ туса ирттернĕ, тет вăл. Çак ĕçре айăпланакан Шахт уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Пысăк промышленниксем çав виçĕ çынна пур майпа та пулăшса тăнă. Вăрçă пуçланиччен темиçе çул малтанах Гитлер Шахта, вăрттăн приказ парса, пĕтĕм экономикăна пур енчен те вăрçа хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп уполномоченнăй туса хунă. Шахт, Геринг тата Функ, пĕрле ĕçлесе, Германие пĕтĕм тĕнче историйĕнчи чи хăватлă çар машини туса хунă, çакăн çинчен халăхсем Германи Польшăна, Голландие, Бельгие тата Францие тапăннă хыççăн тин пĕлчĕç.

Айăплакансен представителĕ Германин çар министерствинче ĕçленĕ паллă работник—Томас генерал-майор вуланă лекцие вуласа парать. Томас каланă тăрăх, ултă çул хушшинче гитлеровецсем пехота дивизийĕсен хисепне 7-рен 38 таран ӳстернĕ (çав шута 4 мотомехдивизи кĕрет), 45 танковăй дивизи туса хунă, 2 линкор, 4 крейсер туса пĕтернĕ е тума пуçланă, летчиксен хисепне 250.000 çынна çитернĕ. Томас çав лекцире: нимĕçсен çар промышленноçĕ вăрçă пуçланнă чухне чи вăйлă промышленность пулнă, тесе мухтаннă. Хурçă шăратас тĕлĕшпе Германи Америка хыççăн пынă, алюмини тĕлĕшпе унтан иртсе кайнă, Германин авиаци промышленноçĕ тĕнчере чи малти вырăнта тăнă. Çĕршывăн экономикине вăрçа валли çавăн пек вăйлăн та пĕр чарăнмасăр хатĕрлесе пыни историре урăх пулман, тесе мухтаннă Томас. Айăпланакан Шахт, пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă опытне шута илсе, 1936 çулта Германие вăрçă валли кирлĕ чĕртавара, чи малтан каучука, çунтармаллине тата хурçа, Германирех çителĕклĕ таран тумалли план çырса хатĕрленĕ. Çав задачăна пурнăçа кĕртме тăватă çуллăх плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе уполномоченнăй пулнă Геринга хушнă. Каярахпа Шахтпа Функ çав плана промышленноçа финансăн пур отраслĕсенче те пурнăçа кĕртсе пынă.

1939 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче çав Томас генерал-майор генеральнăй штаб офицерĕсем валли вуланă лекцийĕнче çапла каланă: нацистсен экономикăна кĕске вăхăтрах улăштарса лартрĕç, çар çавăн пек тума тахçантанпах ыйтнă, тенĕ. Айăплакансен представителĕ Герингăн пĕр çырăва вуласа парать. Çав çырура гитлеровецсем Совет Союзне хирĕç вăрçа 1936 çултах хатĕрленни курăнать. Çапла тумашкăн Геринг хуçалăхăн пур отраслĕсене те улăштарма ыйтнă. Айăплакан çапла калать: промышленноçа вăрçа пуçлама хатĕрлес ĕçре гитлеровецсене пысăк промышленниксем питĕ вăйлă пулăшнă, тет. Вăл Ван Шницлер промышленник («И. В. Фарбениндустри» правленийĕн членĕ пулнăскер) каланине вуласа парать. Шницлер çапла калать: 1933 çулхи февраль пĕтеспе, Шахт чĕннипе, чи пысăк промышленниксен ушкăнĕ Шахтăн Берлинри çуртне пухăннă. Унта Шахт, Крупп фон Болен (Германи промышленниксен пĕрлешĕвĕн председателĕ пулса ĕçленăскер), Фоглер Штейн тата ыттисем те пулнă. Унта Гитлер та пынă. Гитлер промышленниксене пур майпа та пулăшма сăмах панă. Вăл пысăк промышленниксен Германи экономикин хуçисем пулмалла тенĕ шухăшне панă, вĕсенчен хăйĕн программине пурнăçа кĕртме пулăшу ыйтнă. Крупп фон Болен ăна çакăн пек сăмах панăшăн тав тунă. Промышленниксен пухăвĕ Гитлер партине суйлав кампанине ирттермешкĕн 3 миллион марка укçа парса пулăшма йышăннă.

Документсемпе çирĕплетсе парса, айăплакан çапла калать: Германие вăрçа хатĕрлес ĕçре Шахт нимĕç халăхĕ тата ытти çĕршывсенчи халăхсем шутланинчен пысăкрах вырăн йышăнса тăнă, тет.

Ирхи лару çакăнпа хупăнать.

Ятсăр ту çинче

(Калав)

Пирĕн умра фронт тăрăх, пуклак тăрăллă ансăр та вăрăм лутра ятсăр ту выртать. Кутăрусăн çакă ту никамăн та мар. Пирĕн оборона ту арки çывăхĕпе тăсăлать, тăшманăн—унтан виççĕр метрта, тепĕр çулĕ ту тăрăх пырать. Ятсăр ту тăрăх тăшман мина хирĕсем тунă та, вăл хирсене эпир пырса тасатасран ту çине тăтăшах пулеметсенчен персе тăрать. Çутатакан пульăсем çĕр хута илемлĕ çутă ярăмсем туса вĕçеççĕ. Çак вутлă урлă-пирлĕ ярăмсем, пĕр пăхсан, юмахри тĕлĕнмелле эрешмен картисем пек туйăнаççĕ.

Пехота кĕç-вĕç наступление каймалла. Пирĕн хыçри лапара, вăрманта танксем тăраççĕ. Анчах наступление каяс пулсан, пирĕн ятсăр ту çинчи тăшманăн мина хирĕсем урлă çул уçмалла. Лейтенант ку ĕçе Анфимов сержанта хушрĕ.

Кĕрхи тĕттĕм çĕр. Пĕр сасăсăр илсе пырать сержант хăйĕн юлташĕсене. Тĕл-тĕл пĕкĕрĕлсе, тĕл-тĕл упаленсе шăваççĕ саперсем ятсăр ту арки тăрăх.

Акă, вĕсем çĕçĕсем кăларчĕç. Çĕçĕсемпе çĕре чике-чике, ту тăрăх упаленеççĕ. Çĕçĕ вĕçĕсем тăшманăн хăпарту пек çавракă минисем çине лекеççĕ те, чанк! чанк! тăваççĕ. Саперсем минăсен взрывателĕсене кăлара-кăлара илеççĕ те, сиенсĕрлетнĕ минисене çул айкинелле кустара-кустара яраççĕ. Сасартăк пĕр ракета вжи! туса хăпарчĕ те, сăрта кăнтăрлахи пек çутатса ячĕ. Пирĕн саперсем тикĕс сийлĕ ту çинче ывăç тупанĕ çинчи пек курăнса кайрĕç. Тăшман пулемечĕсем акăш-макăш вăйлă пеме тытăнчĕç. Çутатакан пульăсем саперсем çине çăмăр пек сирпĕнеççĕ. Ниçта пуçа чикме çук. Анфимовпа унăн юлташĕсем çĕр çумне йăпшăнчĕç. Тăшман шăпланассине кĕтсе выртаççĕ. Кĕç-кĕç Фролов сапер ахлатса ячĕ, çывăракан çын пек хăр-хăр! туса илчĕ. Анфимов ун патнелле шăвать. «Фролов! Фролов!»—чĕнет вăл хăйĕн юлташне шăппăн, анчах Фролов сасă памарĕ.

Анфимовăн çилли вĕресе кайрĕ. Çан-çурăмĕ сăрлатса илчĕ. Питĕ те шел пек туйăнса кайрĕ ăна Фролов. Вăл Анфимовăн чи ырă тусĕ. Вĕсем унпала виçĕ çул пĕрле пурăннă. Йывăр самантсенче пĕр-не-пĕри пулăшнă. Татăк çăкăра икĕш пĕр пек пая уйăрса çинĕ. Халĕ акă тăшман ăна ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хучĕ. Хăй татах ракетăсем ывăтать. Унăн пулемечĕсем шавах шатăртатса тăраççĕ. Тăшман вĕсене пурне те тĕп тăвасшăн иккен. Чăтса выртаймарĕ вĕри чĕрелле сержант. «Ĕçе тытăнăр!»—терĕ вăл тепĕр икĕ юлташне. Хăй çĕçĕпе çĕре чике-чике тата хĕрӳрех ĕçлеме пуçларĕ. Çак вăхăтра сасартăк унăн пĕççи калама çук хытă ыратса кайрĕ. Хăй вăл вĕриленсе ӳкрĕ. «Лектерчĕç иккен!»—шухăшларĕ вăл хăй ăсĕнче. Анчах хăй аманни çинчен юлташĕсене пĕр сăмах та каламарĕ сержант. Вăл майĕпен хăрах чĕркуççи çине куклене ларчĕ, çĕççипе йĕпе йĕм пĕççине çурчĕ. Суранран шĕвĕ ăшă юн, шыв пек, палкаса пĕрĕхет. Суран, ыратса, пĕсерте-пĕсерте илет. Сержант, кăсйинчен марля кăларса, сурана сыхма тытăнать.

Юн юхма чарăнчĕ. Анчах сержантăн хăрах ури ыратнипе нимĕн туйми пулнă. Çавах та хăйĕн тусĕшĕн, хăйĕн тăванĕшĕн, хăй йышши сапершăн тăшмана тавăрас ĕмĕт, çамрăк çилĕ, ку суранран та вĕрирех. Вăл вĕри сержантăн чĕрине пĕсертет. Унсăр пуçне, часах пирĕн чăçсем наступление каймалла. Анфимов сержантăн хăйĕн икĕ юлташĕпе вĕсене валли çул уçмалла. Сержант шăлĕсене çыртрĕ, хырăмĕ çине тăсăлса выртрĕ. Аллисем çине çĕкленчĕ. Хăрах чĕркуççийĕпе тĕртсе, малалла шума пуçларĕ. Çĕççине çĕре чике-чике каллех минăсем шырать, каллех мина хыççăн мина сиенсĕрлетет те, аякалла кустарса ярать.

Икĕ сехет хушши пĕр сасă памасăр чăтăмлăн ĕçлерĕ аманнă сержант. Хăйĕн суранĕ хытă ыратнă пулин те, вăл хăйĕн ĕçĕпе, чăтăмĕпе сывă юлташĕсене хисеплĕ ĕçе туса пĕтерме хавхалантарса, ĕçре вăй-халпа хăюлăх парса тăчĕ.

В. АХТУБАЙ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-93, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00683 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59... 1 п. л. Тираж 10.000 экз.